Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

97 (8058) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 12-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Ачасен малашлӑхӗ – тӗп вырӑнта

Вӗрентӳ учрежденийӗсенче

*Ҫӗнӗ технологисем вӑй илсе пыракан вӑхӑтра ҫамрӑк ӑрӑва ыранхи кунпа пурӑнма вӗрентесси – паянхи шкулсен тӗп тӗллевӗ. Ҫак чӑнлӑха Турайри вӑтам шкулта вӗрентекенсем те алӑ тупанӗ ҫинчи пек курса тӑраҫҫӗ. Ӑна пурнӑҫа кӗртессине хӑйсен кулленхи ӗҫӗн шӑнӑрӗ тесе шутлаҫҫӗ. Музыка учителӗнче 25 ҫул ӗҫлекен Калерия Ивановна Албутова (сӑн ӳкерчӗкре сулахайри) асӑннӑ шкулта – 15 ҫул. «Хам вӗрентнӗ ачасем хушшинче манӑн ҫула суйласа илекенсем те пурри хавхаланса ӗҫлеме пулӑшать», – терӗ вӑл хӑйӗн ӗҫтешӗ Римма Ершова ҫине тинкерсе. Римма Трифоновна 1974 ҫултанпа ҫак шкулта ачасене математика вӗрентет. «РФ халӑха вӗрентес ӗҫ отличникӗ» 25 ҫул хушши директорӑн вӗрентӳ енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ пулса та ӗҫленӗ.*

А. БЕЛОВ
сӑн ӳкерчӗкӗ.



Ҫавра сӗтел

## Митинг, пикет пирки

2004 ҫулхи июнӗн 19-мӗшӗнче йышӑннӑ 54-ФЗ № «Пухусем, митингсем, демонстрацисем, ушкӑнпа утнисем тата пикетсем ҫинчен» Федераллӑ саккунпа килӗшӳллӗн Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ 2012 ҫулхи ноябрӗн 30-мӗшӗнче 77 № «Раҫҫей Федерацийӗн гражданӗсен Чӑваш Республикинче пухусем, митингсем, демонстрацисем, ушкӑнпа утнисем тата пикетсем ирттермелли правине пурнӑҫлассине тивӗҫтересси ҫинчен» Саккуна алӑ пуснӑ. Вӑл ӑна официаллӑ йӗркепе пичетлесе кӑларнӑранпа вунӑ кун иртсен вӑя кӗрет.

Ҫавна май пирӗн районти ял тӑрӑхӗсен территорийӗсенче ҫавӑн йышши массӑллӑ мероприятисем ирттермелли вырӑнсене палӑртассипе район администрацийӗн ларусем ирттермелли пӗчӗк залӗнче декабрӗн 10-мӗшӗнче ҫавра сӗтел хушшинчи калаҫу иртрӗ. Унта депутатсен районти Пухӑвӗн хӑш-пӗр депутачӗсемпе ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем, обществӑлла организацисен представителӗсем хутшӑнчӗҫ. Пухӑннисем ҫак кун массӑллӑ мероприятисем ирттермелли вырӑнсене сӳтсе явса палӑртрӗҫ, унӑн списокне ҫирӗплетме ЧР Министрсен Кабинетне тӑратма йышӑнчӗҫ.

Хамӑр инф.

Район администрацийӗнче

## Министр ҫӗнӗ ҫула килсе курчӗ

Ҫӗнӗ ҫул умӗн пирӗн районта паллӑ самант пулса иртрӗ: «Волга» - Мулкачкасси –«Оринино» автомобиль ҫулне туса пӗтерчӗҫ. Иртнӗ эрне кун районта Чӑваш Республикин транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн министрӗ М. Янковский пулчӗ.

Ҫакна каласа хӑвармалла. Асӑннӑ ҫул 1,336 км тӑршшӗ. Ӑна тума республика бюджечӗнчен 18 млн. та 960 пин тенкӗ укҫа уйӑрнӑ. Ӗҫлӗ тӗл пулура район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев Мӑн Сӗнтӗр – Мӑн Хураҫка ҫула юсас ыйтӑва та хускатрӗ. Министр ку ӗҫре Муркашсене пулӑшма шантарчӗ. Ҫула юсассипе проектла смета документчӗсене хатӗрлеме хушрӗ. Ҫитес ҫул вара республика бюджетне пӗрремӗш хут ҫӗнӗрен пӑхса тухса улшӑнусем кӗртнӗ чухне асӑннӑ объекта ҫитес ҫул юсама кӗртсе хума май пулнине палӑртрӗ.

Михаил Вячеславович ӗҫлӗ ҫул ҫӳреври ҫакна палӑртрӗ. Ҫитес ҫул республикӑра ҫулсен юсассине пысӑк тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Ҫавна май ку тӗллевпе сахал мар укҫатенкӗ уйӑрӗҫ. Ҫултӑлӑк хушшинче вара Чӑваш Енре ку ыйтӑва пӗтӗмпех татса пама тӗллев лартнӑ.

Чӑваш Республикинчи транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑх министрӗ ҫак кун ҫавӑн пекех Муркаш лицейӗн ҫуртне ача сачӗ тӑвас тӗллевпе реконструкцилекен вырӑнта та пулса курчӗ.

Иртнӗ тунти кун район администрацийӗн яваплӑ ӗҫченӗсемпе ирттернӗ канашлура район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев вӑхӑтра ямасӑр ҫулсене юсассипе проектла смета документчӗсене хатӗрлемеллине палӑртрӗ.

Л. ПАВЛОВА.

## Бизнес-инкубаторта – черетлӗ лару

Предпринимательсем канашларӗҫ

Ҫак кунсенче бизнес-инкубаторта район администрацийӗн пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство аталанӑвӗн Канашӗн черетлӗ ларӑвӗ пулчӗ. Ӑна МСО "Моргаушская" акционерсен хупӑ обществин генеральнӑй директорӗ, депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗ, обществӑлла канашӑн членӗ, предпринимательсен канашӗн ертӳҫи В. Семенов уҫрӗ тата ертсе пычӗ.

Кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйту республика шайӗнчи «Ҫулталӑкри предприниматель» конкурса хутшӑнма тивӗҫлӗ кандидатсем суйласси тата вӗсен ӗҫ-хӗлне пӑхса тухасси пулчӗ. Конкурса тӗрлӗ номинаципе пӗтӗмлетеҫҫӗ. Палӑртма кӑмӑллӑ, пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство субъекчӗсем ял хуҫалӑх ӗҫӗнче, обществӑлла апатланура, суту-илӳре тата ытти енӗпе пуҫаруллӑ тимлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та асӑннӑ конкурса хутшӑнма тивӗҫлисем те пӗрре кӑна мар пулчӗҫ.

«Муркаш пасарӗ» муниципаллӑ унитарлӑ предприяти ертӳҫи тата бизнес-инкубаторти ӗҫ-хӗле йӗркелесе ертсе пыракан Н. Субботин пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство субъекчӗсене консультаци, информаци, йӗркелӳпе методика пулӑшӑвӗ парас ӗҫ епле пынипе паллаштарчӗ. Ҫавӑн пекех бизнес-инкубаторти юлашки вӑхӑтри улшӑнусем ҫинче райадминистраци экономика тата агропромышленность комплексӗн аталанӑвӗн пайӗн пуҫлӑхӗ Н. Костина чарӑнчӗ.

Муркаш район центрӗ виҫӗ пинрен тытӑнса пилӗк пин таран ҫын пурӑнакан пысӑк калӑпӑшлӑ ял шутланать. Акӑ, тӗслӗхрен, выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен районти станцирен тухар та сӗт-ҫу заводне ҫул тытар. Вӑхӑчӗ сахал мар иртет, ҫавӑн пекех тепӗр вӗҫӗнчен тухса бизнес-инкубатора ҫитсе килме те. Ку ыйту чылайӑшне хумхантарать. Ҫакна тӗпе хурса Муркашра обществӑлла транспорт ҫӳреттерес ыйту патне тепӗр хут таврӑнчӗҫ ларӑва пухӑннисем. Халӗ ку енӗпе хӑш-пӗр ӗҫ пуҫланнӑ та ӗнтӗ. Ҫитес вӑхӑтра ҫынсен ыйтӑвне туллин тивӗҫтерессе кӗтекенсем чылай.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Декабрӗн 12-мӗшӗ – Раҫҫей Конституци кунӗ

**ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Сире патшалӑхӑн тӗп уявӗ – Раҫҫей Федерацийӗн Конституци кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

1993 ҫулхи раштав уйӑхӗн 12-мӗшӗнче йӗркелесе ирттернӗ пӗтӗм халӑх референдумӗнче патшалӑхпа общество тытӑмне палӑртакан, этем тата гражданин прависемпе ирӗклӗхӗсене ҫирӗплетекен Раҫҫей Федерацийӗн Тӗп саккунне йышӑнса хӑварнӑ.

Ҫав вӑхӑтран пуҫласа демократиллӗ право патшалӑхӗ туса хурас ҫул ҫине тӑнӑ ҫӗнӗ Раҫҫей вӑй илсе малалла аталанса пырать. Ҫавӑнпа та паян ҫак уяв Тӑван ҫӗр-шыв шӑпипе кӑсӑкланакан, аслӑ патшалӑхӑмӑрпа килес ӑрусем те мӑнаҫланма пултарччӑр тесе шухӑшлакан кашни ҫыншӑнах ҫывӑх та пӗлтерӗшлӗ.

Этем прависемпе ирӗклӗхӗсене чи пысӑк хаклӑх вырӑнне хурса йышӑнасси, уйрӑм ҫын интересӗсене ытти ҫынсен интересӗсемпе килӗшсе тӑмалла тӑвасси, халӑхӑн ырлӑх-пурлӑх шайне тата ӑс-хакӑл пурнӑҫне лайӑхлатса пырасси – Чӑваш Енри влаҫ органӗсен кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп тӗллевӗсем. Нумай нациллӗ Республикӑмӑрта пурӑнакан ҫынсем Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗ палӑртакан тӗп нормӑсемпе принципӗсене ҫирӗп пӑхӑнни хамӑр ума лартнӑ тӗллевсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлассине шантарать.

Чӑваш Енре пурӑнакан кашни ҫыннах ҫирӗп сывлӑх, ҫӗр-шывӑмӑр ырлӑхӗшӗн тӑвакан ӗҫре ҫитӗнӳсем, чун канӑҫӗ тата ырлӑх сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ
М. ИГНАТЬЕВ.**

## Ҫыннӑн прависемпе ирӗклӗхӗсен саккунӗ

Конституци – Тӗп саккун. Раҫҫей Федерацийӗн Конституцине 1993 ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче пӗтӗм халӑхпа сасӑласа йышӑннӑ. 1994 ҫулта вара Раҫҫей Президенчӗн «Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗн кунӗ ҫинчен» указӗпе килӗшӳллӗн декабрӗн 12-мӗшне патшалӑх уявӗ тесе ҫирӗплетнӗ.

Совет Союзӗнче 1977 ҫулччен 1936 ҫулта йышӑннӑ СССР Конституцийӗн кунне декабрӗн 5-мӗшӗнче паллӑ тунӑ пулнӑ. Кайран уява октябрӗн 7-мӗшне куҫарнӑ. Ун чухне ҫӗнӗ Конституци – «Аталаннӑ социализм Конституцине» йышӑннӑ. Конституци кунне уявлассин традицийӗ хальхи Раҫҫейре те манӑҫман.

2004 ҫулхи декабрӗн 24-мӗшӗнче РФ Патшалӑх Думи Раҫҫей Федерацийӗн Ӗҫ кодексне улшӑнусем кӗртнӗ. Унта Раҫҫей уяв кунӗсен календарьне ҫӗнӗрен палӑртнӑ. Ҫапла вара 2005 ҫултан тытӑнса декабрӗн 12-мӗшӗ Раҫҫейре кану кунӗ шутланмасть. Конституци кунне Раҫҫей паллӑ кунӗсен шутне кӗртнӗ.

1993 ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче Раҫҫейре историре пӗрремӗш хут пӗтӗмӗшле тытӑмӗ енӗпе ҫӗнӗ Тӗп саккун йышӑннӑ. Вӑл тӗнчери чи пысӑк хаклӑх ҫын, унӑн прависемпе ирӗклӗхӗсем пулса тӑраҫҫӗ тесе палӑртрӗ, Раҫҫейри демократи йӗркелӗхӗн тытӑмӗ, ҫак хаклӑх енӗсене пӑхӑнассишӗн патшалӑх тивӗҫлӗхне ҫирӗплетрӗ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

***Район администрацийӗн 2012 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнчи 1061 номерлӗ йышӑнӑвӗпе ҫитӗнекен ӑрӑва вӗрентессе тата воспитани парассине нумай ҫул ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн тата ҫитӗнӳсем тунӑшӑн район администрацийӗн Хисеп грамотипе ҫаксене наградӑланӑ:***

- Ярапайкассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул директорне **Николай Васильевич КУДРЯШОВА**;
- Орининти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулта чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен **Лайма Васильевна ГОРШКОВӐНА**;
- педагогика ӗҫӗн ветеранне **Николай Филиппович ЕРШОВА.**

Кӗскен

## «Ударник» хуҫалӑхӑн – ҫӗнӗ ертӳҫӗ

2012 ҫулхи сентябрӗн 17-мӗшӗнче «Ударник» хуҫалӑх ертӳҫӗсӗр юлчӗ. Платон Давыдов пирӗнтен уйрӑлса кайнӑ хыҫҫӑн хуҫалӑх ертӳҫин тивӗҫӗсене Илья Шивирев пурнӑҫласа пычӗ. Ҫак кунсенче хуҫалӑх ҫӗнӗ ертӳҫипе паллашрӗ. «Ударник» ФГУП директорӗ пулма Владимир Федорова ҫирӗплетнӗ.

Владимир Михайлович Вӑрнар районӗнчи Чӑрӑшкас Мӑрат ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, унччен Вӑрнарти ашкакай комбиначӗн генеральнӑй директорӗн ҫумӗ пулса ӗҫленӗ. Унӑн Чӑваш Республикин Пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен министерствинчи тата патшалӑх пурлӑхӗн федераллӑ агентствин Чӑваш Республикинчи территори управленийӗнчи ӗҫ стажӗ пӗтӗмӗшле 10 ҫулпа танлашать.

Хамӑр инф.

# Ял хуçалăхĕнче çамрăк специалистсем кирлĕ

**Кадрсен ыйтăвне мала хурса**

***«Аçăр-аннĕр сире специальность илччĕр, ĕмĕрĕпе çак профессипе ĕçлесе пурăнччăр, ывăл-хĕрĕсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупчăр тесе укçа-тенкĕ тăккалать сире вĕрентсе. Çавăнпа та вĕсем тăрăшни сая ан кайтăр тесен çакăнта вĕреннĕ пĕлÿпе тĕллевлĕ усă курмалла сирĕн. Хамăр районти ял хуçалăх предприятийĕсенче вара сире хапăл тусах кĕтеççĕ», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев иртнĕ эрнере Чăваш ял хуçалăх академийĕн студенчĕсемпе иртнĕ тĕл пулура. Çакăн пек калама сăлтавĕ те çук мар. Иртнĕ çул асăннă вĕренÿ заведенийĕнчен пирĕн районти 16 яшпа хĕр вĕренсе тухнă. Вĕсенчен... 2-шĕ çеç района, ял хуçалăхне таврăннă.***

***Паян вара ял хуçалăх академийĕнче Муркаш тăрăхĕнче çуралса ÿснĕ 119 яшпа хĕр вĕренет. «Çак çамрăк специалистсен пысăк çарĕнчен çурри те пулсан района таврăнсан та, эпир хамăр район, районти ял хуçалăх отраслĕ шанчăклă алăсенче тесе калама пултаратпăр», – сăмахсемпе пĕрлех Ростислав Николаевич студентсем хăйсен профессине тĕрĕс суйласа илнине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен ял хуçалăх специальноçне илнĕ çынна ĕççĕрлĕх пĕрре те хăратмасть, çимесĕр çын пурăнаймасть. Апла пулсан ял хуçалăх специалисчĕ – яланах кирлĕ çын.***

***Чăннипех те, Ростислав Николаевич калашле, яла çамрăксем таврăнни ял хуçалăхĕн малашлăхĕ пуррине кăтартса парать. Паян районта ял хуçалăх сферинче 1,5 пин çын ĕçлет пулсан, вĕсенчен 30 çула çитичченхи çамрăксем...113 çын.***



**ТĂВАН РАЙОНТАХ ПУРНĂÇРИ ВЫРĂННЕ ТУПЧĂР ТЕСЕ**

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çак тĕслĕхсем çинче те чарăнчĕ. Çамрăк çемьесене, ялта пурăнакан, ĕçлекен специалистсене çурт-йĕрпе тивĕçтерес тĕллевпе район тĕрлĕ программăсене хутшăнать. Кăçал кăна яла 2013 çулччен аталантармалли республика программипе килĕшÿллĕн 2 çамрăк çемье тата ялти 6 специалист çурт-йĕрлĕ пулчĕç. «Çурт-йĕр» федераллă программăпа уйăрса панă укçа-тенкĕпе те район вăхăтра усă курать, апла пулсан çĕнĕ хваттерлĕ çамрăк çемьесемпе специалистсен йышĕ те ÿссех пырать.

Ял хуçалăхĕнче кадрсен ыйтăвне татса парас тесе акă кĕçех район администрацийĕпе Чăваш ял хуçалăх академийĕ килĕшÿ тăваççĕ. Çапла вара студентсем производство практикине районти ял хуçалăх предприятийĕсенче ирттерĕç. Ку вара студента вĕренсе тухиччен хăйне валли ĕç вырăнĕ тупма пулăшĕ. Чăваш çыртса пăхмасăр ĕненмест тенĕ евĕр, хуçалăхри ырлăхпа нушана курса-пĕлсе суйласа илĕ яш-кĕрĕм хăйĕн пуласлăхне.

Маттур та пултаруллă çын вăл ылтăн кирек ăçта та йăлтăрккине çухатман пекех тÿрех курăнать. Кун йышшисене ĕçе хапăл туса йышăнни те сăмахсăрах паллă. Район администрацийĕ çавăн пек пултаруллă студентсене хавхалантарма тепĕр пуçару турĕ. Ял хуçалăх академийĕпе пĕрле Социализмлă Ĕç Геройĕн Е.А. Андреевăн ятран паракан стипендине туса хума палăртнă. Çитес çултан илме пуçлĕç ăна маттур студентсем.

**СТУДЕНТСЕМ «ПУТЬ ИЛЬИЧА» АГРОФИРМĂНА ĔÇЛЕМЕ КАЯСШĂН**

Çак сăмахсем пуш параппан çапни маррине студентсем район пурнăçĕ, «Путь Ильича» агрофирмăри çĕнĕ сĕт-çу комплексĕ уçни çинчен калакан кинофильма пăхсан тепĕр хут курса ĕненчĕç.

Асăннă предприяти хуçи О.А. Дельман хуçалăх малашлăхĕ çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн залри студентсен куçĕсем татах та йăлтăртатма пуçларĕç. Патшалăх та пулăшать иккен ял хуçалăхне ура çине тăратма тăрăшакансене. Тĕслĕхрен, асăннă комплексăн пĕрремĕш черетне хута яма «Россельхозбанк» 148 млн. тенкĕ кредит панă, тата тепĕр 37 млн. хăйсен укçине хывнă Дельмансем.

Комплексăн иккĕмĕш черетне хута яма çакăнтан та ытларах укçа-тенкĕ хывма палăртнă. Анчах кунпа ĕç вĕçленмест. Олег Александрович каланă тăрăх комплексăн иккĕмĕш черетне хута ярсан (ăна кăçал тума пуçласа тепĕр çул вĕçлеме палăртаççĕ) тепĕр пин пуç ĕне-выльăх вырнаçмалăх тата тепĕр ферма тума палăртнă. Ку комплекспа та пĕтĕм ĕçе механизацилеççĕ, 4 доярка 1 пин ĕнене пăхать пулсан, тепĕр комплексĕнче вара ĕнесене роботсем сумалла.

Тепĕр пысăк ĕмĕт вăл – район администрацийĕпе пĕрле кунта темиçе хуçалăха пĕрлештерсе пĕр пысăк холдинг тăвасси.

«Путь Ильичара» кашни ĕнерен çулталăкра 8 пин кг сĕт сума палăртаççĕ. Пыра-киле кунта сĕт кăна мар, аш туса илессипе те ĕçлеме палăртнă.

Çак сăмахсем пурнăçпа пĕр килесси асăннă хуçалăхăн ĕç тăвакан директорĕн В. Вязов сăмахĕнчен те яр уççăнах курăнать. Иртнĕ çулсенче кунта кашни ĕнерен 2 пин килограмран кăшт ытларах сĕт сунă пулсан, кăçал 5 пинлĕ чикĕрен иртсе каяççĕ. Выльăхсем те талăкра халĕ малтанхи пек 300-шер грамм мар, 800-шер грамм ÿт хушаççĕ. Хуçалăх ĕçлес тесе ĕçлесе пынине кунта юнашар ял тăрăхĕсенчи çĕрсене нумай ĕçе кĕртни те çирĕплетет. Ярославкăпа Турай ял тăрăхĕсенчи 300 га çĕре ĕçе кĕртрĕç кунта. Çапла вара паянхи куна пĕтĕмпе 1117 га çинче ĕçлеççĕ. Пурĕ вара ĕмĕтсене пурнăçлама 6 пин га çĕр кирлĕ пулать. Пысăк холдинг туса хуни предприятисене аталанма та май парать, çĕрпе эффективлă усă курма та.

Студентсемшĕн илĕртÿлли вара кунта сахал мар. Паян тесен паян кунта диплом çыракан студентсене ĕçе илме хатĕр. Пурăнма паянхи кун ыйтакан условисемлĕ общежити пур. Хулари хăна çуртĕнчен пĕрре те кая мар. Валерий Иванович тата çакна палăртрĕ, каярахпа кунта ĕçлекенсем валли çуртсем тума палăртнă. Çакна валли çĕр лаптăкне те палăртса хунă. «Кăçал ĕçе илнĕ специалистсем иккĕшĕ те 30–40 пин тенкĕрен кая ĕç укçи илсе курман. Кашни специалист ĕçне кура илет ĕç укçине», – терĕ Валерий Иванович.

«Халĕ çак залранах агронома, зоотехника, ветеринара илсе кайма хатĕр эпир»,– терĕ ĕç тăвакан директор.

**ШУХĂША ВĔÇЛЕНĔ МАЙ**

Мичурин яч. хис. агрофирма ертÿçи Б. Михайлов вара студентсенчен кăмăл пуррисене хăй патне пыма чĕнчĕ. Хуçалăх çĕр çырли ĕрчетессипе ĕçлет. «Хулара пурăнса ялта ĕçлеме те пулать. Европăри пек. Хуларан пирĕн пата çитме 40 км çеç», – терĕ.

Чапаев яч. хис. хуçалăх ертÿçи И. Захаров та хуçалăхра специалистсем кирлине палăртрĕ, хăйсем патне ĕçлеме пыма чĕнчĕ.

Малашлăхлă ял хуçалăх предприятийĕсем пирĕн районта татах та пур. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев чăх-чĕп, хур-кăвакал ĕрчетекен «Фаворит», пахча çимĕç çитĕнтерессипе малта пыракан технологипе усă куракан «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, Кăткас ял тăрăхĕн территорийĕнче ялти туризма аталантарассипе ĕçлекен, тĕрлĕрен хунав-калча çитĕнтерекен тата ытти предприятисем çинче чарăнчĕ.

Апла пулсан паянхи студентсен хăйсен пурнăçри вырăнне тупма тăван районта та услови сахал мар. Асăннă тĕл пулу вара çакна студентсем хăйсем те ăнланса илнине, кăçал ял хуçалăхне çĕнĕ варкăш килсе кĕрессе шантарать.

**Л. ПАВЛОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Хĕл пуринчен те çирĕп ыйтать

**Хĕллехи тапхăр**

Хыçра вун пĕр уйăх, апла пулсан ку таранччен пурнăçланине хак пама сăлтавĕ те пур. Çак кунсенче район администрацийĕнче пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен тата хресчен (фермер) хуçалăхсен ертÿçисен анлă канашлăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ тата ертсе пычĕ.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕнчи тĕп эксперт специалисчĕ Т. Алексеева каларĕ. Вăл выльăх-чĕрлĕх отраслĕн 11 уйăхри аталанăвне тишкерчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен ку таранчченхи кăтартусем районта япăх маррине палăртмалла. Пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 3758 килогрампа танлашать. Çакă иртнĕ çулхинчен 4 процент пысăкрах. Ку енĕпе Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх уйрăмах хастар ĕçлет. Вĕсен сăвăмĕ 5551 килограмм чухлĕ пулнă. Çавăн пекех «Путь Ильича» хуçалăх та ÿсĕмлĕ ĕçленине палăртмалла. Кунта тăрăшакансем ĕне пуçне 4972 килограмм сĕт туса илнĕ. Оперативлă кăтартусенчен районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен хĕл тапхăрĕ валли 30,9 центнер апат единици янтăлани курăнать. Акă «Путь Ильича» агрофирма, «Колос» чикĕллĕ яваплăхлă общество, Чкалов ячĕпе хисепленекен, «Восток», «Ударник» хуçалăхсем выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ.

– Хăш-пĕр хуçалăхсенче вара уйрăмах йывăр лару-тăру. Çавăнпа та çакăн йышшисем малашне епле тата хăш енĕпе ĕçлессине çитес юн кунччен татăклăн палăртмалла, – терĕ Ростислав Николаевич кунта пухăннă ертÿçĕсене. Çавăн пекех вăл йывăр лару-тăрулла хуçалăхсем пĕрлешсе ĕçлесен вырăнлă пуласси пирки тата çĕр ыйтăвĕ тавра каларĕ.

Сысна ĕрчетессипе районта çичĕ хуçалăх тимлет. Вун пĕр уйăхра самăртма хупнă выльăхăн талăкри вăтам ÿт хушаслăхĕ 400 грампа танлашать. Ку енĕпе уйрăмах «Герой», «Свобода», «Ударник» хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем районти вăтам кăтартуран та ÿстернĕ. Майракаллă шултра выльăх талăкерен 594 грамм ÿт хушнă, ку та иртнĕ çулхинчен пысăкрах.

Т. Алексеева район администрацийĕн ятарлă комиссийĕн членĕ пулнă май хуçалăхсенчи ферма коллективĕсем хĕл кунĕсене епле хатĕрленнипе те паллаштарчĕ.

– Комисси хăйĕн черетлĕ ĕçне вĕçлерĕ. Кашни хуçалăхра вара тĕрлĕ лару-тăру. Йывăрлăхсене çĕнсе малаллах туртăнакансем те пур. Çав хушăрах ĕçлеме майлă условисем çинчех тимлĕхе çухатнă ответлăха туйман специалистсем те тĕл пулчĕç. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ вара кулленех вăй хума ыйтать. Акă сăвăм пĕрре чакрĕ пулсан ăна часах хăпартаймăн вĕт. Çак ĕçсемпе вара хуçалăх экономики тÿрремĕнех çыхăннă, – терĕ Татьяна Александровна тимлĕрех пулма ыйтса.

Никамшăн та вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, сыснасен африка чуми уйрăмах ку отрасльте вăй хуракан кашни ĕçчене пăшăрхантарать. Раççей Федерацийĕнче вара ку чир тĕлĕшпе çивĕч лару-тăру. Унăн вирусне тĕрлĕрен те тĕрлĕ регионта тупаççĕ. Апла пулсан ку хăрушлăх пирĕн пата çитмест тесе те калаймăн. Çавăнпа та унран сыхланасси чи малти вырăнта пулмалла. Ку инкек пуçаруçи вара чирлĕ е маларах чирлесе иртнĕ сысна шутланать. Ăна сараканĕ – кăшлакан чĕр чунсем, килти тата тискер чĕр чунсем, çавăн пекех çак чирпе чирлесе вилнисемпе çыхăну тытнисем. Çакăн пирки выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ертÿçи Н. Яковлев каларĕ.

Хĕлле урапа, çулла çуна хатĕрлеççĕ тенине тĕпе хурса çитес çул çĕре шуратса хăварасси пирки паянах шухăшлама пуçласан вырăнлăрах пулĕ. Пысăк пахалăхлă вăрлăхпа тивĕçтересси çинчен ЧР «Россельхозцентр» филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ А. Павлов каларĕ.

– Çитес çул вăрлăх хакĕ ÿсме пултарать. Çавăнпа та меллĕ вăхăтра кашнийĕнех туллин усă курма тăрăшмалла. Пахалăхлă вăрлăх Ильич ячĕпе хисепленекен тата Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче туянма пулать. Паха вăрлăх кăна пысăк тупăш парать, – терĕ Александр Ильич ку енĕпе халех тимлемеллине палăртса.

Çавăн пекех канашлура ял хуçалăх ĕçĕсем ирттерме Федераллă бюджетран тĕрлĕ субсиди уйăрни пирки каларĕç, тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Уроксем бассейнра иртеҫҫĕ

**Проект**



ЧР Вĕрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви пулӑшнипе республикӑра «Эпĕ ишме пĕлетĕп» проект пурнӑҫланса пырать. Ҫак проектӑн тĕллевĕ те пысӑк – республикӑра виҫĕ ҫул хушшинче шкул ачисен 70 процентне ишме вĕрентмелле. Республикӑра проекта пурнӑҫлама пилотлӑ вĕрентӳ учрежденийĕсене те палӑртнӑ. Муркашри вӑтам шкул – вĕсен йышĕнче.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнчеипе шкулта ятарлӑ уйӑхлӑх пырать: ачасем ҫине тӑрсах ишме вĕренеҫҫĕ. Иртнĕ эрне кун районти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулĕнче – «Сывлӑх» ФСК-ри бассейнра шӑпах Муркаш шкулĕнчи 5 «а» класра вĕренекенсен урокне пӑхма май пулчĕ. Урока Зоя Углева физкультура учителĕ ертсе пыратчĕ.

– Ҫак уйӑхлӑх вӑхӑтĕнче уроксене бассейнра ирттертĕмĕр. Ишме пĕлмен ачасем ишме вĕренчĕҫ. Ишессипе шкулта ятарлӑ конкурс та йĕркелерĕмĕр. 2–4 классем хушшинче 4 «б» класс, 5–6-мĕшсем хушшинче 5 «а» класс», 7–8-мĕшсем хушшинче 7 «б» класс, аслисем хушшинче 10 «б» класс ҫĕнтерӳҫĕсем пулса тӑчĕҫ. Ку класра та ишме пĕлменнисем пурчĕ, вĕренчĕҫ. Пурте шыва хӑнӑхрĕҫ, – каласа парать Зоя Григорьевна бассейнра ишекен ачасем ҫине кӑмӑллӑн пӑхса.

Чӑнах та, ишме пĕлни кашни ҫыншӑнах пĕлтерĕшлĕ: ачасем кӑна мар, аслисем те шывра путнӑ тĕслĕхсем кашни ҫулах нумай. Апла пулсан бассейнра иртекен уроксем ачасемшĕн интереслĕ кӑна мар, усӑллӑ пулнинче те иккĕленмелли ҫук.

**Н. НИКОЛАЕВА** сӑн ӳкерчĕкĕ.

# Пассажирсем хӑйсене хӳтлĕхре туйччӑр

**Ҫул-йĕр ҫинче**

Ҫанталӑк улшӑнсах тӑрать: ӑшӑтать, сивĕтет, юр ҫӑвать, шӑнтать... Тул чаcах ҫутӑлмасть, тĕттĕмленме вара часах пуҫлать. Ҫавна май ҫул-йĕр ҫинче инкек пулас хӑрушлӑх та ӳсет.

Иртнĕ вырсарни кун, декабрĕн 9-мĕшĕнче, акӑ водитель тимсĕрлĕхне пула М–7 трасса ҫинче машина кювета ҫаврӑнса ӳкет. Хӑвӑртлӑх режимне пӑхӑнманран пулса тухнӑ ҫапла. Машинӑри пассажир больницӑна лекет.

Ҫав кунах «Сура» автоҫул ҫинче кун каҫ енне сулӑнсан маларах асӑннӑ сӑлтава пулах пĕр машина хирĕҫ килекен транспорт речĕ ҫине тухса ҫаврӑнса ларать. Унта пынӑ тепĕр машинӑпа ҫапӑнать. Ку аваринче те пассажирсем суранланаҫҫĕ.

Икĕ тĕслĕхĕнче те айӑплӑ водительсене саккунпа килĕшӳллĕн административлӑ ответ тыттарнӑ.

Пассажирсем нумай чухне ҫакӑн евĕр лару-тӑрура хӑйсене, паллах, хӳтлĕхсĕр туяҫҫĕ. Ҫӑмӑл машинӑсенчисем кӑна мар, ятарласа пассажирсене турттармалли транспорт ҫинчисем те. Мĕншĕн тесен ҫак транспорт хутшӑннипе те ҫул ҫинче сахал мар инкек пулса иртет. Акӑ ҫулталӑк пуҫланнӑранпа пирĕн районта маршрут транспорт хатĕрĕсем хутшӑннипе 4 авари пулнӑ. Вĕсенче икĕ ҫыннӑн пурнӑҫĕ вӑхӑтсӑр татӑлчĕ, саккӑрӑн суранланчĕҫ. Ҫавӑнпа та хӑрушсӑрлӑх писиххийĕсем, минтерĕсем пирки, ачасене валли ятарлӑ креслосем пулмалли манмалла мар.

Пассажирсем турттармалли транспорта тĕрĕслени аварисен тĕп сӑлтавĕсене те палӑртать. Вĕсен шутĕнче: палӑртнинчен ытла ҫын лартни, хӑвӑртлӑх режимне пӑхӑнманни, ҫулйĕр ҫинче ҫуран ҫӳрекенсене е транспорт хатĕрне ҫул паманни тата ытти те.

Пассажирсене турттаракан автотранспорт водителĕсен дисциплинине ҫирĕплетес, ҫак транспорт хатĕрĕсемпе пулса иртекен аварисене асӑрхаттарас тĕллевпе пирĕн районта та, республикӑри пекех, «Автобус» операцивлӑ профилактика мероприятийĕ пырать.

**С. ИВАНОВ,**
**ГИБДД районти уйрӑмĕн пуҫлӑхĕ.**


**ООО «ВИКТОРИЯ»**

* Представительство в судах всех инстанций.
* Составление договоров, претензий, исковых заявлений.
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП, внесение изменений.
* Ведение бухгалтерского учета, составление отчетности.
* Кадровое делопроизводство.
* Бизнес — консультации.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru



**К сведению ПОКУПАТЕЛЕЙ!**
На первом этаже здания Дома быта открылась ВЕТЕРИНАРНАЯ АПТЕКА с широким ассортиментом медицинских препаратов и кормовых добавок для животных. 3-3.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 9-10.





## Прогноз погоды

| | среда 12 декабря | | | | четверг 13 декабря | | | | пятница 14 декабря | | | | суббота 15 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -11 | -12 | -12 | -11 | -13 | -14 | -14 | -15 | -17 | -18 | -18 | -19 | -20 | -20 | -19 | -19 |
| Давление мм | 763 | 763 | 765 | 766 | 767 | 766 | 768 | 768 | 769 | 768 | 770 | 771 | 771 | 770 | 771 | 772 |
| Влажность % | 87 | 84 | 79 | 85 | 82 | 76 | 77 | 77 | 80 | 80 | 81 | 78 | 80 | 81 | 71 | 81 |
| Ветер м/сек | 2 | 3 | 4 | 5 | 4 | 4 | 5 | 5 | 3 | 2 | 2 | 3 | 2 | 2 | 2 | 3 |
| | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | С-В | Ю-В | В | В | С-В | Ю-В | В |
| Солнце восход / заход | | 09:15 | 16:18 | | | 09:16 | 16:18 | | | 09:17 | 16:18 | | | 09:18 | 16:18 | |
| Луна восход / заход | | 07:46 | 15:38 | | | 08:57 | 16:40 | | | 09:53 | 17:55 | | | 10:35 | 19:17 | |


Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43. 12-12.



14 декабря в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий. 4-5.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.

Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL HD. Триколор – 7000 руб. Телекарта – 3000 руб. Карты «Кинозал» со скидкой – 250 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 1-10.

В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники, также газоэлектросварщики с опытом работы на полуавтомате. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия). 6-8.




6-10.

* * *

В стабильную компанию на постоянную работу в связи с развитием требуются наполнители баллонов. Достойная заработная плата, официальное трудоустройство, социальные гарантии. Тел.: (843)255-32-67. 3-4.

* * *

Пыл сутатӑп, 3 литр кĕрекен савӑтри пыл – 1500 тенкĕ. Тел.: 8-927-861-92-46.

* * *

Бурение колодцев, колодезные кольца. Доставка, установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 1-4.

* * *

Срочно требуются швеи в швейную мастерскую в с. Б. Сундырь. Сдельная оплата труда (50/50).
Тел.: 8-919-661-79-76. 2-2.

* * *

Май уйӑхĕнче пӑруламалли шурӑ-хура тынашки сутатӑп. Тел.: 8-903-064-24-61.

* * *

Февраль уйӑхĕнче пӑруламалли хура-шурӑ тĕслĕ тынашки сутатпӑр. Етĕрне районĕ, Янӑм ялĕ.
Тел.: 8-906-383-29-44.

* * *

Продается сено. Тел.: 8-927-996-63-79.

* * *

В магазине «Пчеловодство» – новогодние скидки на мед весовой. Цена 300–310 руб. за 1 кг. Адрес: здание «Сельхозтехники», 1 этаж. Тел.: 8-909-301-45-11.


* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:110301:79 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Сальникова Валентина Николаевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 22. Сальников Владимир Витальевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 22. Сальников Виталий Михайлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 22. Наумов Валериян Иванович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д. 120.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:110301:79. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, поле № 8, полевой севооборот № 1.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Дмитриев Владимир Андреевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Университетская, д. 20, кв. 58.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

Муркаш районĕнчи сывлӑх хуралĕнче ĕҫлекенсем Муркашри тĕп больницӑра тимлекен Н.А. Кузьмина терапевтӑн мӑшӑрĕ, А.В. Кузьмин реаниматологӑн ашшĕ, районта нумай ҫул хушши врач-рентгенолог-ра ĕҫленĕ

**Валерий Петрович**
**КУЗЬМИН**

вӑхӑтсӑр пирĕнтен уйрӑлса кайнӑ пирки пĕтĕм чунчĕрен хурланни ҫинчен пĕлтереҫҫĕ.

Орининти «Золушка» ача сачĕ коллективĕ кунта воспитательте ĕҫлекен А.А. Воробьевӑн

**АМӐШĔ**

вилсе кайнӑ пирки унӑн ҫемйипе тата тӑванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни ҫинчен пĕлтерет.

Орининти вӑтам шкул коллективĕ кунта нумай ҫул техслужащире ĕҫленĕ

**Юлия Мироновна**
**ОХЛЯНОВА**

вилсе кайнӑ пирки унӑн ҫемйипе тата тӑванĕсемпе пĕрле тарӑннӑн хурланса пĕлтерет.


Муркаш районĕнчи «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫат редакцийĕ" Чӑваш Республикин хай тытӑмлӑ учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А ҫурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑҫ пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑҫ пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Ҫыхӑну, информаци технологийĕсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ĕҫлекен управленийĕ 2012 ҫулхи юпа уйӑхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калӑпӑшĕ 1,0 пичет листи.
Ал ҫырӑвĕсене рецензилемеҫҫĕ, каялла тавӑрса памаҫҫĕ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаҫҫĕ.
Рекламӑпа пĕлтерӳсен чӑнлӑхĕшĕн вĕсене паракансем яваплӑ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаҫат юн тата шӑмат кунсерен тухать.
Номер дежурнӑйĕ Белов А.П.
Пичете панӑ 11.12.2012 ҫ.
Пичете памалли вӑхӑт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чӑннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Ҫĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.